Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

63 (8129) № * Юн кун, 2013 çулхи çурла (август) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Видеоконференци

## Кун йĕркинче – çĕнĕ вĕренӳ çулĕ

**Августăн 26-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вĕренӳ системи çĕнĕ вĕренӳ çулне епле хатĕрленсе кĕтсе илнин ыйтăвĕсемпе ирттернĕ канашлу ĕçне хутшăннă. Ăна видеоконференци режимĕпе Раççей Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев ирттернĕ.**

Правительство пуçлăхĕ сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрекен вĕренӳ çинчен калакан çĕнĕ саккун тапхăр-тапхăр пурнăçа кĕрсе пырассине палăртнă. Унăн эффективлăхне тивĕçтерес тесен вара преподавательсемпе воспитательсен те çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Вăл çавна та пĕлтернĕ. Кăçал регионсенчи вĕренӳ системине модернизацилеме 40 млрд яхăн тенкĕ уйăрнă. Вĕренӳ сулĕ пуçланнă тĕле 42 çĕнĕ шкул хута янă.

Тĕп доклада Раççей Федерацийĕн вĕренӳ тата наука министрĕ Дмитрий Ливанов туса панă. Ачасене вĕри апат çитерессине йĕркелессипе лару-тăру Атăлçи федераци округĕнче лайăххах пулнине палăртнă.

Чăваш Енпе илес пулсан хальхи вăхăтра 1006 вĕренӳ учрежденийĕ ĕçлет. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче 318 пин ытла ача парта хушшине ларĕ, вăл шутран 13 пин ытла – пĕрремĕш классем.

Вĕренӳ учрежденийĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитерме пур шайри бюджетсенчен 2 млрд ытла тенкĕ, вăл шутра шкулсен 119 столовăйне модернизацилеме 78,2 млн тенкĕ уйăрнă, пур учрежденисене те пушар сигнализацийĕн автоматла системипе тивĕçтернĕ, полици чĕнмелли кнопкăсем вырнаçтарнă.

Республикăра

## Икĕ енлĕ килĕшӳ

Августăн 22-мĕшĕнче Атăлçи федераци округĕн Чăваш Енри тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров тата республикăри предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Владимир Иванов пĕрле килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшӳ çине алă пуснă.

«Вăл предпринимательсен прависене хӳтĕлемешкĕн çул уçма, административлă чăрмавсене пĕтерме, предпринимательсен хастарлăхне ӳстерме, ĕçлĕ хутшăнусене вăйлатма пулăшĕ, – тенĕ Геннадий Семенович. – Çывăх вăхăтрах предпринимательсен прависене хӳтĕлессипе, вăйра тăракан саккунсене лайăххатассипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухăпăр, республикăн влаç органĕсем Раççей Президентĕн предпринимательсене саккунлă майпа хӳтĕлеме хушнă ĕçе мĕнлерех пурнăçланипе кăсăкланăпăр».

Саламлатпăр



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Шупуç ялĕнче пурăнакан **Юлия Михайловна ПЫРКИНĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырри сан валли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса иртĕр, кĕрекӳ яланах тулăх пултăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – чи пысăк телей те савăнăç.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрĕвĕ, икĕ мăнукĕ, пускилĕсемпе тăванĕсем.**

Ĕçре хастаррисем

## Иккĕмĕш амăш вырăнĕнче



*«Ĕçе килĕштерни, ачасене юратни пулăшса пырать, вăй-хăват хушать», – çапла хуравларĕ Т. Спиридонова çăмăл мар ĕçре мĕн хавхалантарнипе кăсăклансан.*

*Татьяна Дмитриевна Шомикри тĕп шкулта пуçламăш классене вĕрентет, унпа пĕрлех вăл завуч та. Кăçал «унăн» ачисем 3-мĕш класа çӳреме пуçлаççĕ. Çакăн пек миçе ачана анлă пĕлӳ çулĕ çине кăларман пулĕ ĕç ĕмĕрĕнче Татьяна Дмитриевна, малтан Канашри педучилище, кайран Шупашкарти пединститут пĕтернĕскер. Шучĕ çук. Апла пулин те ăшă кулăллă та ырă кăмăллă тата нумай ачашăн вăл иккĕмĕш амăш вырăнне пултăр.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Район уй-хирĕсенче

## Хирсем пушанаççĕ

* Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вырма ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Ĕнерхи кун тĕле районĕпе тĕш тыррă культурисене 12376 гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Ку вăл пĕтĕм лаптăкăн 92 проценчĕ пулать. Çав вăхăтра вырма ĕçĕсен планĕсене «Передовик» хуçалăх 31 процент, «Возрождение» ООО 14 процент кăна пурнăçланă-ха.

* Тырă пĕтĕмпе 20848 тонна çапса тĕшĕленĕ. Тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 16,8 центнерпа танлашать. Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра ку кăтарту 25,1 центнер, Ильич яч. хис. хуçалăхра 25,5 центнер, Суворов яч. хис. хуçалăхра 24,5 центнер. «Передовик» хуçалăх кăтартăвĕ – 5,3 центнер.

* Улăм 10868 гектар çинчен (вырса çапнин 88 проценчĕ) пухса тирпейленĕ. «Ударник» хуçалăхра пухман улăм 707 гектар çинче.

* Ĕнер районти хуçалăхсен хирĕсенче 23 комбайн ĕçленĕ.

* Çĕр улми пĕтĕмпе 619 гектар çинчен пухса кĕртмелле пулсан, 56 гектар (9 процент) кăларса пухнă. Тухăç пĕр гектар пуçне 132 центнерпа танлашать.

* Çĕртме 735 гектар сухаланă. «Путь Ильича» агрофирмăра ку ĕçе 400 гектар лаптăк çинче пурнăçлама ĕлкĕрнĕ.

* Районĕпе кĕрхи культурăсене 3002 гектар çинче (68 процент) акнă.

* Çак вăхăта обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли утă 6644 тонна (129 процент), сенаж 13913 тонна (93 процент), силос 3710 тонна (28 процент) янтăланă.

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ТАТА ХРЕСЧЕН (ФЕРМЕР) ХУÇАЛĂХĔСЕНЧЕ КĔР АКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кĕр аки планĕ. 2. Акнă (гектарпа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 300 | 400 |
| «Восток» | 100 | 50 |
| «Герой» | 170 | – |
| Ильич яч. хис. | 200 | 140 |
| «Путь Ильича» АФ | 300 | 277 |
| «Оринино» | 250 | 170 |
| «Свобода» | 300 | – |
| Суворов яч. хис. | 500 | 840 |
| «Ударник» | 500 | 250 |
| Чапаев яч. хис. | 50 | – |
| Чкалов яч. хис. | 200 | 210 |
| «Агросоюз» | | |
| «Картофель» ООО | 10 | – |
| «Гея» ООО | 30 | – |
| «Колос» АПФ ООО | 100 | – |
| «Бездна» ООО | 100 | – |
| Мичурин яч. хис.АФ ООО | 110 | – |
| «Агро-Че» ООО | 300 | 200 |
| С.К. Сретинский КФХ | 30 | – |
| В.В. Бархаткин КФХ | 100 | 15 |
| А.И. Толстов КФХ | 150 | 50 |
| А.А. Афанасьева КФХ | 120 | 100 |
| А.Н. Пихтеров КФХ | 170 | 100 |

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Кӳршĕсем патĕнче

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова ертсе пынă хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен тăракан ĕç ушкăнĕ иртнĕ кунсенче Мари Эл Республикипе Чул хула облаçĕнче пулнă.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçĕпе паллашнă май ушкăн кӳршĕсем администрацивлă реформăсене пурнăçа мĕнле кĕртнипе те кăсăкланнă. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем ытларах ял тăрăхĕсен экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе, кунта тирпей-илем тата хăт кĕртессипе, халăха шывпа тивĕçтерессипе, çӳп-çап турттарса тухассипе çыхăннă ыйтусемпе интересленнĕ.

Ушкăнра районти хăш-пĕр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле Чăваш халăх академийĕн президенчĕ Е. Ерагин та ĕçлĕ çул çӳреве хутшăннă. Çул çӳрев вăхăтĕнче вăл кӳршĕсен истори страницисемпе те паллаштарнă.

## Хурăнкассисем – тирпейлĕхшĕн

Ф. Васильев ячĕллĕ музей ертӳçи Н. Яковлева пуçарулăхĕпе Хурăнкасси ялĕнче экологи субботникĕ иртнĕ. Субботника Солнечная урамра пурăнакан пур ачана та йыхравланă. Вĕсем чи малтанах кĕтӳ тухса çӳрекен вырăна тирпейленĕ. Пĕверен туратсем, тĕрлĕ çӳп-çап тата кĕленче кăларнă. Çамрăк экологсем çитес вăхăтра ялти ытти вырăнта та тирпейлеме шутлаççĕ.

## Вырăнсем пур

Ачасен пурнăçĕнче, аталанăвĕнче хушма пĕлӳ пĕлтерĕшлине ашшĕ-амăшĕ ăнкарса илчĕ ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра çакна валли майĕсем те чылай. Муркашри искусство шкулĕнче акă ачасем музыка, хореографи, художество, пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмĕсене килĕштерсех çӳреççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа вара кунти ахаль те интереслĕ вĕренӳ программинче çĕнĕлĕхсем те пур.

Çитес кунсенче – августăн 29–30-мĕшĕсенче – шкулти пур уйрăма та вĕренме кĕме хушма экзаменсем иртеççĕ. Çакна шкулта хушма вырăнсем пуррипе йĕркелеççĕ. Хушма пĕлӳ илес текен ачасене хапăл туса кĕтеççĕ. Тĕплĕнрех 63-0-22 номерпе 13.00–17.00 сехетсенче шăнкăравласа ыйтса пĕлме пулать.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Канашлу

## Объектсем хатĕр пулĕç

Августăн 26-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Республикăн строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков канашлура пĕлтернĕ тăрăх пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсен 84,5 проценчĕ çак вăхăта кĕркуннехи-хĕллехи хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕр. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсен хатĕрленӳ ĕçĕсен тĕп калăпăшне вĕçлеме, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне объектсем хатĕррине çирĕплетекен паспортсем илме пăхнă.

Республикăн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçи Сергей Димитриев халăха ĕçе вырнаçма пулăшмалли мероприятисене мĕнлерех пурнăçлани çинчен каласа панă.

Йыхрав

## Акцие пурте хутшăнар

Кăçал Тавралăха хӳтĕлемелли çулталӑк пырать. Çакна тĕпе хурса Раççей хулисемпе регионĕсенче, вăл шутра Чăваш Республикинче те, августăн 31-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Симĕс Раççей» экологи субботникĕ акци иртет.

Ырă пуçару Раççейри «ТЕХЭКО» экологи фончĕ тата обществăлла экологи юхăмĕсен сĕнĕвĕсемпе вăя кĕрет.

Акцин регионсенчи координаторĕсенчен пĕри – регионти «Симĕс хула» экологин обществăлла организацийĕн ертӳçи Федор Алексеев.

**Çакна тĕпе хурса район администрацийĕ асăннă акцие пурне те активлă хутшăнма ыйтать. Вырăнсенче вара çак ĕçе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем йĕркелеççĕ. Çапла вара пирĕн пĕрлехи пуçарулăхпа-тăрăшулăхпа тăван тавралăх, вăл шутра масарсем те, хăтлăрах пулĕç.**

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Вĕренӳ тӳлевсĕр пулнă, пулĕ те

Çĕнĕ саккун



***Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетлĕ 14-мĕш сессийĕ иртнĕччĕ. Депутатсем унта пысăк пĕлтерĕшлĕ документ – Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен» çĕнĕ саккунне йышăнчĕç. Район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕпе Зоя ДИПЛОМАТОВĂПА тĕл пулнă май саккун вĕренӳ ĕçне мĕнле улшăнусем кĕртесси пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.***

**– Зоя Юрьевна, пĕтĕмĕшле мĕн калама пултаратăр çĕнĕ саккун пирки? Вăл шкулсенче вĕренекенсене кăна мар, çавăн пекех педагогсене, воспитательсене, ачасен ашшĕ-амăшĕсене – тĕрĕссипе пурне те пырса тивет темелле вĕт-ха?**

– Документа республика законодательствине ку тĕлĕшпе йышăннă федераци саккунĕпе шайлаштарассине тĕпе хурса хатĕрленĕ. Саккунра республикăн экономикăпа социаллă пурнăç, этнокультура, демографи тата ытти уйрăмлăхĕсене шута илни пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать. Çĕнĕ саккун пĕтĕмĕшле илсен кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрет ĕнтĕ.

**– Ачасене вĕрентесси, воспитани парасси ача сачĕсенчен пуçланни паллă. Çавна май малтанах шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ-хĕлĕнче пулса иртмелли улшăнусем пирки чарăнса тăраймăр-ши?**

– Çак вăхăта 3 çултан тытăнса шкул ӳсĕмне çитиччен ачасене пурне те шкул çулне çитменнисен вĕренӳ учрежденийĕсенче вырăнсемпе тивĕçтернĕ. 3 çула çитменнисем черетре 62 ача. Çывăх вăхăтрах вĕсем валли те садиксенче вырăнсем пулĕç. Ку енĕпе ĕçсем пыраççĕ.

Шкул çулне çитменнисен вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса воспитательсене ĕç укçи тӳлеме тата оборудовани, вĕренӳ пособийĕсем, вăйăсемпе теттесем туянма каякан тăкаксене республика бюджетĕнчен саплаштарма тытăнĕç. Муниципалитетсен çурт-йĕрпе сооружнисене тытса тăнăшăн, коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемелле пулать.

**– Ачасен ашшĕ-амăшне чи малтанах çак ыйту кăсăклантарать пулĕ: çĕнĕ саккун пурнăçа кĕнĕ май ачасене садиксене çӳретнĕшĕн ашшĕ-амăшĕн тӳлевĕ палăрмаллах ӳсмĕ-и? Тĕрлĕрен калаçакансем пур.**

– Кăçалхи август уйăхне илес пулсан пĕр ачана садика çӳретнĕшĕн ашшĕ-амăшĕ вăтамран 600 тенкĕ ытларах тӳлет. Хальхи вăхăтра вара тӳлев суммине ачасен апатланăвĕн 10 кунлăх менюне кура, Роспотребнадзор сĕнĕвĕсене, апатланупа гигиена условийĕсене лайăхлатма кирлине шута илсе палăртас ĕçсем пыраççĕ. Вăрттăнлăх мар, ачасене садиксенче пăхса пурăннăшăн тӳлев сумми кăштах ӳсмелле. Анчах ку вăл пĕтĕмпех ачасене апатлантарассине лайăхрах йĕркелеме, ачасен сывлăхне çирĕплетме каймалла. Палăртса хăвармалла, тӳлев сумми ӳснĕ май республика бюджетĕнчен ашшĕ-амăшне тӳлевшĕн саплаштарасси те ӳсет. Пĕр ачашăн вăл 25 процентпа, икĕ ачашăн 50 процентпа, виççĕ ачашăн 75 процентпа танлашать.

**– Зоя Юрьевна, Саккунра вĕренекенсен, педагогика ĕçченĕсемпе ашшĕ-амăшĕн хушма прависене, пулăшупа социаллă гаранти мелĕсене палăртнă. Вĕсем пирки мĕн калама кăмăл пур?**

– Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн шкул çулне çитмен ачасен вĕренĕвĕ те, пĕтĕмĕшле пуçламăш, пĕтĕмĕшле тĕп тата пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илесси те, професси вăтам пĕлĕвĕ илесси те тӳлевсĕр пулĕç. Уншăн укçа тӳлеме тытăнасси пирки сăмах çук. Кунсăр пуçне малашне конкурс мелĕпе аслă пĕлӳ илесси те тӳлевсĕр пулмалла.

Чăваш тата вырăс чĕлхисем Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисем пулса тăраççĕ. Çавна май вĕсене шкулсенче вĕрентме кирлĕ мĕн пур условисене те туса пама пăхнă.

**– Кунпа пĕрлех министерство анлă калăпăшлă задача палăртать – 2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур шкулсене те 100 процентчĕпех вĕренӳ кĕнекисемпе тӳлевсĕр тивĕçтермелле. Пурнăçланĕ-и мĕн палăртни?**

– Çапла, малашне ашшĕ-амăшĕн кĕнекешĕн укçа тӳлемелле пулмасть. Паллă ĕнтĕ, пур шкул ачине те сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кĕнекесемпе тӳлевсĕр кăна мар, çитменнине çĕнĕ кĕнекесемпех тивĕçтерме май килмĕ. Çапах та вĕсем пурин валли те çителĕклĕ пулмалла, усă курма юрăхлисем пулĕç.

Кунта çавна каласа хăварни те вырăнлă. Малашне усă курнă кĕнекесене вăхăтран вăхăта улăштарса тăрĕç. Вĕсем библиотекăсенче упранĕç. Вĕренекенсен кĕнекесене вĕренӳ çулĕ пуçлансан библиотекăсенче илмелле пулать, вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн вара каялла библиотекăна памалла. Пĕр кĕнекепех ытти çулсенче те вĕренме тивет. Çавăнпа та вĕсене уйрăмах типтерлĕ тытса усрас пулать.

Кĕнекесем тӳлевсĕр пулаççĕ терĕмĕр, анчах та предметсен ĕç тетрачĕсене ашшĕ-амăшĕн туянмалла пулать. Тетрадьсемпе учебниксене пăтраштарма кирлĕ мар.

**– Шкул форми пирки ыйту хускатнă пулăттăм.**

– Шкул коллективĕсене ку ыйтăва вырăнсенчи лару-тăрăва тата майсене, ашшĕ-амăшĕн сĕнĕвĕсене шута илсе татса пама сĕннĕ. Пĕрпĕр шкул пĕтĕм шкул ачи валли пĕр пек форма хатĕрлеттерме пултарать. Теприсем тата 1-мĕшĕнчен тытăнса 4-мĕш классем валли пĕр йышши форма, 5 – 8-мĕшсем валли – тепĕр йышши, 9 – 11-мĕшсем валли татах урăххине заказ пама пултараççĕ. Уйрăм классем хăйсене килĕшекен форма хăйсем суйласа илнĕ тĕслĕхсем те районти шкулсенче çук мар. Малашне шкулта вĕренекенсен пĕр йышши форма куллен тăхăнмалли те, уяв тумтирĕ те тата спорт форми те пулмалла. Ку задачăна тапхăр-тапхăр татса памалла пулать.

**– Саккунра ăслă-тăнлă (одаренные), инвалид ачасене пырса тивекен, çамрăк педагогсемпе ялта пурăнакан педагогсен социаллă гарантийĕсем тĕлĕшпе çĕнĕлĕхсем пур.**

– Ачасене пурне те вĕренме тивĕçлĕ условисем туса пама пăхнă. Вĕренекенсен интересĕсене кура, ку е вăл предмета тарăнрах, тĕплĕнрех вĕренес кăмăллисем пулсан шкулта ятарлă классем йĕркелеме ирĕк пур.

Кунсăр пуçне шкула пырса çӳреймен инвалид ачасене дистанци мелĕпе вĕрентессине пăхса хунă. Çакна 10 вĕренӳ учрежденийĕнче йĕркеленĕ. Çавна валли педагогсене, вĕренекенсен ашшĕ-амăшне е вĕсен саккунлă представителĕсене ятарлă курссем йĕркелесе вĕрентнĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Муркаш шкулĕн базиçинче дистанци вĕренĕвне йĕркелеме республика бюджетĕнчен 1,3 млн ытла тенкĕ, кунсăр пуçне çавăн чухлех федераци бюджетĕнчен те уйăрса панăччĕ. Унпа кирлĕ оборудовани, ытти хатĕрсемпе материалсем туяннă, кадрсене комплектланă.

Ялти шкулсене ĕçлеме каякан çамрăк специалистсене хавхалантарассипе тĕрлĕ майсем пăхса хунă. Акă аслă пĕлӳ илнĕ 35 çула çитмен çамрăк педагог ялти шкула ĕçлеме каять тата 3 çул хушши çавăнтах ĕçлеме килĕшӳ тăвать пулсан, вăл республика Пуçлăхĕн 2012 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнчи указĕпе килĕшӳллĕн ипотека пулăшăвне тивĕçет. Кунсăр пуçне çамрăк специалистсене шалу çумне 0,3 коэффициент шучĕпе хушса тӳлеççĕ. Малашне вара асăннă коэффициента 0,5 çитерме палăртнă. Сăмах май хальхи вăхăтра Калайкасси шкулĕнче математикăпа информатикăна, Нискасси шкулĕнче математикăна вĕрентекенсем кирлĕ.

**– Зоя Юрьевна, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçăниччен шутлă кунсем юлчĕç. Мĕн калас кăмăлăр пур хамăрăн калаçăва вĕçленĕ май?**

– Эпир хальлĕхе палăртнă тăрăх кăçал сентябрĕн 1-мĕшĕнче районĕпе 3484 ача парта хушшине ларать, пĕлĕвĕн аслă тĕнчине çул хывма тытăнать. Май килнипе усă курса вĕсене, ачасен ашшĕ-амăшне, учитель-педагогсене, воспитательсене çитсе килекен çĕнĕ вĕренӳ çулĕ, Пĕлӳ кунĕ ячĕпе саламлатăп, ĕçре, вĕренӳре çĕнĕ çитĕнӳсем, ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Сентябрĕн 1-мĕшĕ умĕн

# Шкул форми пирки

Юлашки икĕ çул хушшинче шкул çулне çитнĕ ачасен шкула çӳремелли çи-пуçĕ пирки хĕрӳ сăмах-юмах пырать. Ашшĕ-амăшĕ хушшинче çеç мар, телевиденипе те ку ыйтăва тăтăшах хускатаççĕ. Пĕр шухăшлăх çук.

Пирĕн районти шкулсенче те шкул формине йăлана кĕртес ыйту çивĕч тăрать. Чылай шкул коллективĕ хăйсене кăмăла каякан фирмăсемпе килĕшӳ туса ачасен ашшĕ-амăшĕ килĕшнипе вĕренекенсене шкул çи-пуçĕпе тивĕçтернĕ ĕнтĕ.

Пирĕн Çатракасси шкулĕ те çав йĕркене пăхăнса ĕçлерĕ. Анчах чылай арçын ача кирлĕ виçеллĕ çи-пуç туянаймарĕ: е çӳлти пайĕ аслă, е аялти пайĕ пĕчĕк. Фирмăра та шайлаштарса пама ирĕк çук имĕш. Хĕр ачасем валли те кирлĕ размерсем тупăнайманни пăшăрхантарать.

Сентябрь уйăхĕччен шутлă кунсем юлчĕç. Ашшĕ-амăшĕн мĕн тумалла: ачасем ӳснĕ, çĕнĕ çи-пуç туянма тăхтамалла е ытти çулсенчи çи-пуçах туянса памалла? Совет Союзĕ вăхăтĕнчи пек Раççейĕпех пĕр форма шутласа кăларма май çук-ши? Мĕн чухлĕ перекетлĕрех пулĕччĕ! Ăс-тăн шайне çи-пуçа кура ӳстерме май пулсан кашни çул çĕнĕрен те çĕнĕ форма улăштармалла та...

**Ачасен ашшĕ-амăшĕ ыйтнипе**
**С. ФЕДОРОВА.**

Çатракасси ялĕ.

Районадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 çулхи августăн 13-мĕшĕнчи 860 № йышăнăвĕпе хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçре чылай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Константин Александрович АНТОНОВА**, хурт-хăмăр ăстине (Москакасси ял тăрăхĕнчи Мăрсакасси ялĕ);

– **Надежда Владимировна ОВЧИННИКОВĂНА**, хресчен (фермер) хуçалăх ертӳçине (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Хорачка ялĕ).

Юбилей

## Саламлатпăр



Сарчак ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Муркаш салинче пурăнакан, нумай çул кирпĕч заводĕнче вăй хунă **Галина Алексеевна ЕРШОВА** çак кунсенче 55 çул тултарать. Çав ятпа эпир ăна çирĕп сывлăх сунса ăшшăн саламлатпăр. Сăмах май каласан вĕсем мăшăрĕпе пурăнни çак кунсенче 35 çул çитрĕ.

Галина Алексеевна, мăшăрун юратăвĕ, ачасен хисепĕ, мăнуксен тимлĕхĕ вăй-хăват парса тăтăр, малалла пурăнма çывăх çынсен ăшшине те туйса пурăн эсĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.

**Саламлаканĕсем: кӳршисем тата юлташĕсем пурĕ саккăрăн.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, мамака, кукамая – Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Викторовна МАТВЕЕВĂНА** çуралнă кунĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕсем, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Иртнĕ вăрçă çулĕсемпе

# Якаткасси хĕрĕ те çапăçнă

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче 1942 çулта каçхи бомбардировщиксен хĕрарăмсен авиаци полкĕсене виççĕ йĕркеленĕ пулнă. Вăл шутран иккĕшĕнче кăштах арçынсем те пулнă. Виççĕмĕшĕнче вара, 261 çынран тăракан 46-мĕш полкра, пĕр арçын та пулман. Чи аслă должноçрисенчен пуçласа çыруçă таранах пурте хĕрарăмсем пулнă. Тĕрĕсрех каласан аслăрах командирсене шута илмесен.

Вăрмар район çынни, малтан учитель пулса ĕçленĕ таврапĕлӳçĕ Бурмистров вăрçăра тыткăна лекнĕ Раççей çыннисем унтан тарса ют çĕршывсен территорийĕсенчи партизансемпе пĕрле тăшманпа çапăçни çинчен чылай материал пухса икĕ кĕнеке пичетлесе кăларнă. Çав материалсене пухнă май вăл хĕрарăмсен полкĕсем пирки те хыпарсем пĕлкеленĕ. Ăна уйрăмах çав полксенче чăваш хĕрĕсем пулнă-ши текен шухăш кăсăклантарнă.

Çапла вара вăл 46-мĕш полкра Муркаш районĕнчи Якаткасси ялĕнче çуралнă Антонина Иванова пулнине тупса палăртнă. Анчах тĕпчевçĕ, 80 çултан иртнĕскер, чирлесе ӳкнĕ те Якаткасси хĕрĕ пирки çĕннине урăх нимех те пĕлме пултарайман.

Эпĕ вара хамăр ентеш пирки тĕплĕнрех пĕлес шухăшпа тĕрлĕ архива çырусем ятăм. Интернет урлă та кирлĕ информацисем шырарăм. Паянхи куна Антонина Иванова пирки çакна пĕлме май килчĕ.

Вăл 1921 çулта алхаснă выçлăхчен çуралса кăшт çирĕпленме ĕлкĕрнĕ ача пулнă. Выçлăх вăхăтĕнче ашшĕпе амăшĕ вилнĕ. Çапла вара вăл тăлăха юлнă. Выçлăх çул çавăн пек ачасене тĕрлĕ хуласенчи ача çурчĕсене ăсатнă. Кун пек вĕсене вилĕмрен çăлнă.

Антонина Иванова та ача çуртĕнче ӳснĕ. Вăрçă пуçланас умĕн вăл Хусанта пулнă. Унти аэроклубра самолетпа вĕçме вĕреннĕ. Хĕрарăмсен авиаци полкĕсене йĕркеленĕ чухне ăна та çавăнта чĕннĕ. Çапла вара вăл 46-мĕш полка лекнĕ. Унта вăл механик шутланнă.

Кашни самолет пуçне полкра 6 – 7 çын тивнĕ. Механик, техник, моторист тата ыттисем самолет черетлĕ вĕçеврен таврăнсанах васкасах ăна юсама-хатĕрлеме тытăннă. Çапла майпа самолет пĕр каçра 4 – 5 хут та сывлăша çĕкленме пултарнă.

46-мĕш полк летчикĕсем По-2 текен самолетсемпе вĕçнĕ. Вăрçăччен ку самолетсем курсантсен вĕçме вĕренмеллисем шутланнă. Вăл тиев нумаях илеймен, анчах пĕр каçрах темиçе хут та çула тухма пултарнă. Ăна валли аэродром тупма та йывăрах пулман. Самолет икĕ вырăнлă пулнă, унта летчикпа штурман вырнаçнă.

Асăннă полкăн çулйĕрне те тупса палăртма май килчĕ. Полк Сталинград çывăхĕнче тăшманпа çапăçма тытăннă. Кайран Çурçĕр Кавказра, Крымра, унтан Белоруссире, Берлинтан Хĕвел анăçнелле иртиччен, вăрçă вĕçлениччен çапăçнă. Пултарулăха кура полка гвардейски ят панă. Полк командирĕ Евдокия Бершанская пулнă.

Интернет урлă шыраса полкри паллăрах çынсен сăн ӳкерчĕкĕсене те тупма май килчĕ. Унта Антонина Иванова сăн ӳкерчĕкĕ те пур. Вăрçă хыççăн Якаткасси хĕрĕ Белоруссирех юлнă пулас. Унăн малашнехи кун-çулĕ паллă мар.

Ку таранччен хĕрарăмсен авиаци полкĕнче пĕртен-пĕр чăваш хĕрĕ Антонина Иванова пулни çеç паллă. Эпир, Муркашсем, хамăр ентешĕн вăрçă çулĕсенчи паттăрла ĕçĕсемпе мухтанма тивĕç.

**И. ВЯЗОВ,**
**таврапĕлӳçĕ.**

# «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер» акци пырать

Прокуратурăран

Наркотикпа усă курассине хирĕç кĕрешес ĕç епле пурнăçланнине район прокуратури тишкернĕ. Асăннă наркăмăшпа сутуилÿ тунине палăртма право йĕркине сыхлакан органсен представителĕсен ятарлă ушкăнĕ Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тата уйрăм предпринимательсен лавккисемпе аптека учрежденийĕсене тĕрĕсленĕ, йĕркене пăснă факт тупса палăртман. Район шайĕнче ку тĕлĕшри йĕркене пăхăнса ĕçлессипе 2010 – 2020 çулсем валли тĕллевлĕ программа йышăннă, вăл федераци тата республика саккунĕсемпе килĕшÿллĕн пурнăçланать.

Иртнĕ çул шалти ĕçсен пайĕ наркотикпа усă курассине çыхăннă 11 преступлени тупса палăртнă, кăçалхи пĕрремĕш çур çулта çакăн йышши 2 факт пулнă. Асăннă орган следователĕсемпе дознавателĕсене ятарлă вĕренĕве хутшăнтарнă. Район администрацийĕ çумĕнче наркотик хатĕрĕсемпе усă курассине хирĕç кĕрешес ĕç комиссине йĕркеленĕ. Асăннă комисси кашни кварталтах ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен тата ытти органсен отчечĕсене хаклать.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта çул çитмен çамрăксемпе право темипе 46 лекци иртнĕ, рейда 32 хутчен тухнă. Пĕтĕмĕшле хакласан вара пурнăçлама палăртнă ĕçсем тивĕçлĕ шайра пулса çитейменни курăнать, вăл шутра наркомани профилактики, реабилитаци программи тата ытти те. Çавăнпа та кунта ведомствăсем хушшинчи тачă ĕçлĕ çыхăну кирлĕ. Пĕрремĕш çур çулта çак сферăри йĕркесĕрлĕхшĕн ответлă пĕр ĕçчене асăрхаттарнă.

Наркотикпа усă курассине хирĕç кĕрешес уйăхлăх пынă май «УК ЖКХ» чиккĕлĕ яваплăхлă обществo ертÿçипе калаçса татăлса июнь уйăхĕшĕн коммуналлă услугăшăн тÿлемелли квитанцисен тÿнтер енне район прокуратури тата ытти органсен «шанăç» телефонĕсен номерĕсене çырнă.

Район прокуратурин, РФ Пенси фончĕн çурчĕсем çинче, почта уйрăмĕсенче наркотикпа усă курнин, суту-илÿ тунин анонимлă пĕлтерĕвĕсем валли уйрăм ещĕксем çакнă.

«Солнышко», «Алый парус», «Лесная сказка» ача-пăча лагерĕсенче прокуратура тата сывлăх сыхлав учрежденийĕн ĕçченĕсем «Çамрăксем наркотика хирĕç» темăпа калаçу ирттернĕ.

**Чăваш Ен прокуратури «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер» уйăхлăх малалла пынине пĕлтерет. Çавна май наркотикпа усă курнине, суту-илÿ тунине асăрхасан, илтсен çак номерсемпе шăнкăравлама ыйтать: 62-7-59 (район прокуратури), 62-6-67 (районти шалти ĕçсен пайĕ), 8-937-013-93-41 (СМС пĕлтерÿ).**

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# «Ывăлăм, чарăнса-а-ам!»

Следстви комитетĕнчен

Ача амăшĕ çине алă çĕклеме пултарни чуна çÿçентерет. Вăл пире кун-çул панă, тĕрĕс-тĕкел ÿстерессишĕн канăçне те пĕлмен, чирленĕ вăхăтра çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупман. Апла пулсан вăл ыррине кăна, уйрăмах ачасен тимлĕхне тивĕç. Мĕн куратпăр-ха паянхи пурнăçра?

...Каç пулнă ĕнтĕ. Самай çуллăннă ывăл эрех ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ. Кун пек чухне вара амăшĕн чĕри, паллах, вырăнта мар. Вăл, вату пулин те, пĕр самантне те ача-пăчашăн пăлханмасăр ирттермест вĕт. Ку хутĕнче те хĕрарăм ывăлне: «Ах, ачам, çав черккене тытмасан тем пекехчĕ те. Ан ĕç-ха, ырри патне илсе çитерместех вăл. Ман пирки шухăшла, хăв пурнăçна йĕркеле», – терĕ ĕçпе кушăрханă аллисемпе пит-куçне шăлса тата ывăлĕнчен шикленсе.

Ах! Уяр кун аслати кĕмсĕртетрĕ тейĕн. Ара хĕрарăм лайăххи пултăрчĕ, инкек-синкек ан тухтăрччĕ тесе асăрхаттарчĕ вĕт. Кун пек йăлăнни пĕрре кăна мар пулнă ĕнтĕ. Тĕрĕс çул çине тăма вара çăмăл мар иккен. Ватă амăшĕн пуçĕнчен ывăлĕн йывăр чышки пĕр хутчен тÿлплеттерчĕ, тепре, ун хыççăн каллех. «Ах, чарăнсамччĕ хăть, мана шелле, хăвăн пурнăçна ан хуç», – йăлăнчĕ амăшĕ.

Куç умĕнче çăлтăрсем ялкăшма çунма пуçларĕç. «Епле-ха каплах, эпĕ тĕрĕс-тĕкел ÿстерессишĕнех кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшрăмçке», – тесе сулăна-сулăна кайрĕ амăшĕ, ал-ури чĕтрерĕ унăн. Çапла хĕрарăм вăйсăрлансах пычĕ... Текех çăлтăрсем те ялкăшмарĕç, йăлăну сăмахĕсем аран-пирĕш пулса тăтăлчĕç. Самай нушаланнă хыççăн кун-çул та татăлчĕ ывăлне пурнăç парнеленĕ амăшĕн. Анчах та ывăл çакна ăнланчĕ-ши? Тепĕр тесен малашне мĕн пуласса пĕлсех вăл çак ирсĕр ĕçе пурнăçланă-çке.

Преступлени факчĕсем çителĕклĕ пулнине шута илсе уголовлă ĕç пуçарма йышăннă.

**Пичете следстви комитечĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

# Ватă çынсем экскурсире пулчĕç

***Ветерансем пурнăç уттипе тан пыма тăрăшаççĕ. Акă Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунне паллă тăвассинчен те ветерансен вăхăтлăх пурăнмалли Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕнчи хисеплĕ ватă çынсем аякра юлмарĕç.***

***Асăннă кунпа çыхăннă мероприятие вĕсем экскурси шайĕнче ирттерчĕç. Çапла вара вĕсем çул çÿреве тухрĕç. Ветерансем Ильинка ял тăрăхĕнчи Раççей шайĕнче «Йывăç – чĕрĕ çут çанталăк палăкĕ» статуса тивĕçнĕ юман патĕнче пулчĕç, кунти илемлĕхпе киленчĕç.***

***Социаллă пулăшупа вăхăтлăх тивĕçтерекен уйрăмăн ертÿçи С. Илларионова паллă кун историйĕпе паллаштарчĕ. Туслă йыш Атăл шывĕ хĕрринче ларса иртнĕ вăхăта аса илчĕ, калаçмалли вара вĕсен тупăнсах пычĕ.***

**Р. МАКАРОВА.**

Çул çÿрев



# Кăвакарчăн илемлĕ кайăк, анчах...

Асăрханăр

***Кăвакарчăн – илемлĕ кайăк. Вăл ытларах çын пурăннă çурт-йĕр тавра-шĕнче пурăнать, çавăнпах та пулĕ ытлах хăрамасть. Ачасем вара вĕсене алăранах апатлантараççĕ. Çут çанталăк тусĕ тĕрлĕ тăрăха вĕçни, çавна май чир-чĕр куçарма пултарни пирки манмалла мар.***

Кăвакарчăн кирек хăш тăрăхра та пурăнать. Вăл тавралăха илем кÿрет, ачашлăхпа юрату паллине пĕлтерет, алла çăмăллăнах хăнăхать.

Вĕсем тĕш тырă продукчĕсем упранакан вырăнта уйрăмах йышлăн апатланаççĕ, хăйсем хыççăн вара тĕрлĕ тасамарлăх, каяш хăвараççĕ. Хăш чухне кайăк апат, хÿтлĕх шыраса çенĕке, ытти пÿлĕме кĕрет, кунта виткĕчсĕр тĕрлĕ çимĕç упранма пултарать. Кăвакарчăн çавăн пекех пасарти таварпа та апатланать. Çакăнтан, паллах, вăл е ку чирпе сиенленессе пуçланать те.

Çурт-йĕр тавраш ĕнчи, кантăк çумĕнчи шăтăк-çурăка та кăвакарчăн иленет, йăва çавăрать. Кунта вара каяшсăр пуçне тĕк-мамăк, лĕкĕ, çăмарта хуппи, кайăк вилли тата ытти пухăнать. Çаксем йăлтах тĕрлĕ чир-чĕре аталанма май параççĕ. Çапла вара инфекци йăви хамăртан инçех те мар иккен.

Орнитоз, пситтакоз, сальмонеллез, туберкулез тата ытти чир аталанас хăрушлăх пысăк. Çаксене шута илсе ачасене кăвакарчăна алăпа тытма, ачашлама, пÿрнене унăн çăварне чикме ирĕк ан парăр, кирек хăçан та асăрханулă пулăр. Усăлса çÿренĕ хыççăн вара алăна, уйрăмах ачасенне, супăньпе çума ан манăр.

Пурнăç çулĕ

# Юратнă вĕрентекен

**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте).**

Апат илсе килсенех, Шашкар ачисем иккĕнччĕ, аллисене витрене чиксе какай татăкĕсене кăларса илетчĕç. Эпир вара яшкине çиместтĕмĕрччĕ. Матвей Иванович Багров пыратчĕ, апатне сыпса пăхатчĕ те: «Ачасем, яшки мĕнле тутлă, мĕншĕн çиместĕр?» – тетчĕ. Тĕрĕсне калама хăранă, какай çиекенсем пире хăйсен чышкисемпе пуçран шăтарасла пусатчĕç.

Ун чухне хальхи шкул çуртне кулпалатчĕç. Турпас, çÿп-çап пуçтарма уроксем хыççăн илсе каятчĕç. Тăрăшсах ĕçлеттĕмĕр, кашни класа уйрăм лаптăк паратчĕç. 6-мĕш класра çĕнĕ шкулта вĕрентĕмĕр. Класра 3 хĕр ача пулнă, ыттисем – арçын ачасем.

Учительсем вăтам çулхисем пулнă. Чăваш чĕлхипе – Анна Сергеевна Матвеева, математикăпа – Георгий Матвеевич Ефремов, вырăс чĕлхипе – Нина Константиновна, черченипе, юрлассипе – Петр Константинович Кольцов, географипе – çамрăк учительница Мария Даниловна, историпе – Анфиса Максимовна, биологипе – Иван Яковлевич Яковлев.

Шкула 10 класс пĕтерринченех шупăрпа, хĕлле сăхманпа çÿренĕ, урара çăпатаччĕ. Çумăр чухне кил хушшине тухсанах ура йĕпенетчĕ (çăпатана хурăн хуппи хунă пулсан та), вара çав йĕпе урапа 6 урок шăл шаккаса лараттăмăр. Арçын ачасем тухса таратчĕç.

Çуркунне çитсен çăпата çумне йывăçран коплак çĕлесе паратчĕç. Вара питĕ савăнаттăмăр. Киле пилĕк çухрăм утса килсен килти хуçалăхри ĕççенчен ман валли шыв йăтасси пулатчĕ. Шывĕ инçетре, выляма каяс килетчĕ.

Хам шкулта ĕçлеме пуçласан Леонид Иванович, Иван Яковлевич, Михаил Капитонович, Анфиса Максимовна учительсем аса килетчĕç, вĕсен ĕçĕсенчен хам валли пĕтĕмлетÿ тăваттăм.

1940 çулта 10 класс пĕтертĕм. Вечерта пĕрпĕринчен макăрса уйрăлтăмăр. Шăллăмпа иксĕмĕр Шупашкара кайса пединститута заявлени парса хутăмăр. Шăллăм – физикăпа математика факультетне, эпĕ – чăваш чĕлхипе литературин факультетне. Экзаменсене лайăх тытрăмăр. Истори факультетĕнче вĕренекенсем çитменрен декан пире, темиçе хĕр ачана, истори факультетне пĕтерсен таçта та ĕçлеме пулать тесе, хăй майлă çавăрса, истори факультетне куçарчĕ. Çапла вара истори факультетĕнче вĕренме пуçларăмăр.

2 – 3 уйăх вĕренсен вĕреннĕшĕн укçа тÿлемелле турĕç. Мĕн тумалла? Колхозникăн укçа ăçтан тупмалла? Колхоз укçа паман. Эпир иккĕн, аттене хĕрхенсе, эпĕ хĕр ача май, учительсен 2 çул вĕренмелли институтне куçма шутларăм. Шăллăм 4 çул вĕренмеллинчех вĕрентĕр терĕм. Заявлени патăм, куçрăм. Анчах унта куçсан манăн хамăн тĕллĕн нумай вĕренмелле пулчĕ. Конституци предметне хам тĕллĕн вĕренсе экзамен тытма пултартăм.

Института кайма ботинка илсе пама пултарчĕ атте, анчах пальто илме укçа çитмен. Çавăнпа эпĕ сăхманпах кайнă. Ирсерен ытти вĕренекенсем гардероба пальтосем парса хăвараççĕ, эпĕ хам сăхмана вăтанса паратăм, кайран сăхманпа урăх каймарăм, ялти çĕвĕç пиншак çĕлесе панăччĕ те, çав пиншакпа хĕл каçипех чупнă. (Институтпа общежити хушши 200 метр кăначчĕ те).

Эпĕ питĕ кино пăхма юрататтăм. Атăл хĕрринче «Родина» кинотеатр пулнă, ачасен сеансĕ те пурччĕ. Сăхмана тăхăнаттăм та хĕрсене (пÿлĕмре эпир пиллĕкĕн пурăннă): «Хамăр ял çыннисем патне хăнана каятăп-ха»,– тесе тухса чупаттăмччĕ. Кинона каяссине пĕлтерсен вĕсем те тапранаççĕ, пальтосем хушшинче манăн сăхман аркине силлесе вĕсене намăс кăтартас килместчĕ.

Институт – хальхи электроаппарат завочĕн çурчĕ. Вăт çавăнтан Атăл хĕрне, кайран каялла чупаттăмччĕ. Кайран хĕрсем пĕлчĕç те эпĕ «хамăр ялсем» патне çÿренине, вара пĕрлех илсе çÿреме пуçларĕç.

Эпĕ кăштах чирлерĕм, декан мана администрацийĕ тивлă отпуск паратпăр терĕ. Врач патне кайса справка илме каларĕ. Врач пÿлĕмĕ иккĕмĕш хутраччĕ. Ăна хам шухăша, декан каланине пĕлтертĕм те мана тĕрĕсленĕ хыççăн каларĕ: «Чупса анса кай та, каялла та чупсах хăпар»,– терĕ. Антăм, хăпартăм. Вăл итлесе пăхрĕ те: «Эпĕ сана хамах сывататăп, ан кай, ан пăрах. Пăрахса кайсан ялта çамрăксемпе çÿресе вĕренес шухăша та пăрахăн»,– терĕ. Юлтăм, вăл мана сыватрĕ. Халĕ те вăл врача сыватнăшăн, ырă канаш панăшăн тав тăватăп. Маншăн вăл тепĕр анне пулчĕ.

Июнь уйăхĕнче вăрçă пуçланчĕ. Ялти радиопа (хура тарелккăпа) урамра Сталин каланине итлерĕмĕр. Ялта кăшкăрашу, макăрашу пуçланчĕ. Арçынсене çар комиссариатне чĕнчĕç, вĕсем вăрçа тухса кайрĕç. Вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Хĕр ачасем хушшинче медсестрасем те пурччĕ (вĕсем пирĕнтен аслăраххисем). Вĕсене те çар комиссариатне чĕнчĕç.

Пĕр уйăх вĕренсен пире Шупашкартан Сĕнтĕрвăррине куçарчĕç, вăрман техникумĕн çуртне пачĕç. Пирĕн института çар çыннисене вырнаçтарчĕç. Ноябрь уйăхĕнче студентсем килĕсене саланма пуçларĕç, темиçе кунтан пире пухрĕç те: «Эсир мобилизованнăйсем, тарсан сире трибунал кĕтет»,– терĕç. Вара пĕр кунтан пире 800 грамм çăкăр пачĕç, стипенди пĕр уйăхшăн, хамăр витĕнме утиялсене илсе чикрĕмĕр.

**(Малалли пулать).**

**О. ВИШНЕВА,**

**Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул учителĕ.**

# Ачасемшĕн пĕлтерĕшлĕ

## Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ



Кăçалхи 7 уйăхра пирĕн районта ачасем хутшăннипе пулса иртнĕ аварисен шучĕ пĕлтĕрхинчен чылай пысăк: çичĕ инкекре пĕр ачан пурнăçĕ татăлнă, вун пĕр ача суранланнă. Пулса иртнĕ аварисенчен пиллĕкĕшĕнче ачасем пассажирсен шутĕнче, ача вилнĕ тĕслĕх шăпах вĕсенчен пĕринче пулнă. Велосипедпа ярăнакан ачасен айăпĕпе пулнă тепĕр инкекре икĕ ача суранланнă.

Ĕç практики ачасемпе çул-йĕр çинче пулса иртекен инкексем уйрăмах кĕркунне нумай пулнине çирĕплетет. Ачасем çуллахи каникул хыççăн тимсĕртерех. Çавăнпа ĕнтĕ çак тапхăрта кашни çулах «Внимание – дети!» тĕллевлĕ асăрхаттару мероприятийĕ иртет. Вăл ĕнер, августăн 27-мĕшĕнче пуçланчĕ. Мероприяти вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш эрни хыççăн вĕçленет. Асăрхаттару мероприятийĕ вăхăтĕнче тĕрлĕ ĕç пурнăçлама палăртнă, вĕсен шутĕнче ачасемпе тĕп пулса калаçасси те, ачасене хăйсене çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене тантăшĕсем хушшинче сарма явăçтарасси те.

Пирĕн районти чылай ача шкула шкул автобусĕпе çӳрет. Çавăнпа та шкул автобусĕсем çула юсавлă тухни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн специалисчĕсемпе пĕрле иртнĕ эрнере районти 17 шкул автобусĕ тĕрĕслерĕмĕр. Тупса палăртнă çитменлĕхсем тĕлĕшпе асăрхаттарусем çыртăмăр. Вĕсене августăн 30-мĕшĕччен пĕтермелле те çакăн пирки сентябрĕн 1-мĕшĕччен пĕлтермелле.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти тĕп инспекторĕ.**

## Православи кĕтесĕ

# Турă Амăшĕ вилни

## (Успение Пресвятой Богородицы)

Августăн 28-мĕшĕнче Христос çыннисем чиркӳре Турă Амăшĕ леш тĕнчене кусса кайнине асăнса праçник тăваççĕ.

Иисус Христос Туррăмăр пĕлĕт çине çĕкленсен, кайран Турă Амăшĕ Иоанн апостол çуртĕнче Иерусалим хулинче пурăннă. Ывăлĕнчен уйрăлсан Таса Хĕр Мария Турра кĕлтуса, çынсене пулăшса хăйĕн кăмăлне пусарса пурăннă, анчах унăн Ывăлĕ асĕнчен кайман. Вăл ĕлĕк Иисус Христос çӳренĕ çĕрсемпе çӳреме юратнă. Пĕрре вăл Елеон тăвĕ çине кайнă. Çак ту çинчен Иисус Христос пĕлĕт çине çĕкленсе кайнă. Вăл Турă Амăшĕ час вилесси çинчен хыпар тунă. Вилес хыпара илтсен Турă Амăшĕ васкаса савăнса киле таврăннă. Киле Çитсен Иоанн Богослова хăй хăçан вилессине каласа кăтартнă. Хăй виличчен Турă Амăшĕн ытти апостолсене курас килнĕ. Турă амăшĕ кĕлтуса ыйтнă тăрăх пурне те пултаракан Турă хăвачĕ тĕрлĕ çĕре саланнă апостолсене пурне те Иерусалима пуçтарнă. Апостолсем пĕр-пĕрне курсан пит тĕлĕнсе кайнă, Турă Амăшĕ вилессине пĕлсен хуйхăрса макăра пуçланă. Турă Амăшĕ вĕсене йăпатса каланă: «Ан макăрăр, эпĕ кирек хăçан та сирĕнпе пĕрле пулăп, сире нихăçан та пăрахмăп. Сирĕншĕн, пĕтĕм тĕнчешĕн Турă умĕнче хута кĕрсе тăрăп», – тенĕ.

Турă Амăшĕ вилес вăхăт çывхарса пынă. Апостолсем Турă Амăшĕ выртакан пӳлĕмре çуртасем çутнă, пурте пĕрле псаломсем юрласа Турă Амăшĕн чунĕ тухасса кĕтсе тăнă. Сасартăк вĕсем тăракан пӳрт çап-çутă çуталса кайнă, çавăнтах Иисус Христос ангелсемпе пĕрле таса Хĕр Марийăн чунне илме пĕлĕт çинчен аннă. Турă Амăшĕ Иисус Христоса курсанах савăнса каланă: «Манăн чунăм Турра аслăлать, манăн сывлăшăм Çăлакан Турăшăн савăнать», – тенĕ. Вара вырăнĕ çине выртсанах унăн чунĕ тухса кайнă, унăн чунне Иисус Христос Хăй пĕлĕт çине илсе кайнă. Апостолсем Турă Амăшĕн ӳчĕпе сыв пуллашса чуп тунă та, хăй каласа хăварнă пек, унăн ӳтне Гефсимания пахчине илсе кайса пытарнă.

Çак праçник – çулталăкра асăнакан аслă праçниксенчен пĕри. Турра ĕненекенсем çак праçника типĕ тытса кĕтсе илеççĕ. Вăл типпе Турă Амăшĕ вилнине асăнмалли типĕ (Успени типпи) теççĕ. Вăл типпе икĕ эрне тытаççĕ. Таса Хĕр Мария Турă Амăшĕ пулнă тивĕçпе Херувимсенчен те аслă, Серафимсенчен те мухтавлă.

**Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ**
**Сергий атте.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1296, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5500 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

* * *

**Требуется персонал на новую АЗС, наполнитель баллонов.**
**Тел.: 8(843)255-32-67. 2-4.**

* * *

**Доставка песка, ОПГС, щебень.**
**Тел.: 8-960-302-60-47. 2-2.**

* * *

**Декабрь уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хура-шурă ĕне тата 8 уйăхри тынашки сутатпăр. Тел.: 8-903-065-22-68. 2-2.**

* * *

**Ултă уйăхри хĕрлĕ-шурă тĕслĕ пăру сутатпăр. Тел.: 8-937-378-96-87.**

* * *

Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, 3523,14 балло-гектаров муниципального образования Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:080901:2.

Заявления принимаются до 27 февраля 2014 года по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, дом 34.

## Прогноз погоды

| | среда 28 августа | | | | четверг 29 августа | | | | пятница 30 августа | | | | суббота 31 августа | | | | воскресенье 1 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +11 | +14 | +16 | +11 | +9 | +15 | +19 | +14 | +14 | +14 | +17 | +13 | +13 | +15 | +19 | +13 | +12 | +17 | +20 | +16 |
| Давление мм | 753 | 753 | 752 | 752 | 752 | 751 | 750 | 749 | 749 | 747 | 747 | 747 | 748 | 748 | 748 | 748 | 749 | 748 | 747 | 746 |
| Влажность % | 83 | 70 | 53 | 74 | 88 | 68 | 50 | 74 | 93 | 99 | 88 | 93 | 98 | 97 | 62 | 86 | 92 | 79 | 63 | 85 |
| Ветер м/сек | 1 | 2 | 4 | 2 | 2 | 2 | 2 | 2 | 3 | 5 | 2 | 2 | 2 | 1 | 1 | 1 | 1 | 4 | 4 | 4 |
| | З | С-З | С-З | З | Ю-З | Ю-З | С-З | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю-З | С-З | С | В | В | В | В |
| Солнце восход / заход | | 05:50 | 19:57 | | | 05:52 | 19:54 | | | 05:54 | 19:52 | | | 05:56 | 19:49 | | | 05:58 | 19:46 | |
| Луна восход / заход | | 22:52 | 14:45 | | | 23:37 | 15:39 | | | - | 16:25 | | | 00:29 | 17:03 | | | 01:29 | 17:34 | |


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ.**
**Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 12-21.**

**Ферма юсама ТĔРЛĔ ĔÇ ПУРНĂÇЛАКАНСЕМ (разнорабочие), сварщик, электрик васкавлă кирлĕ. Ĕç укçи вăхăтра тӳлетпĕр. 10000–12000 тенкĕрен кая мар. Кĕрекаç ялĕ. Тел.: 8-987-674-72-84. 2-5.**

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 6-10.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 21-22.**

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 18-20.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 24-25.

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.**
**Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 6-10.**

**“ВИКТОРИЯ-ОКНА”**
**ЗАМЕР, ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО** 3-10.
СРОК ИЗГОТОВЛЕНИЯ 3-5 ДНЕЙ
**АКЦИЯ БАНКА: весь месяц август кредит на окна без процентов.**
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
ГАРАНТИЯ
КРЕДИТ
РАССРОЧКА
СКИДКА до 35%
7-е окно в ПОДАРОК
REHAU Unlimited Polymer Solutions brusbox KBE ARTEC ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ
**Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной).**
**Тел.: 62-1-20,8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.**

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 9-10.**

**В филиал ООО «Вурнары завод СОМ» (с. Моргауши) требуется приемщик молока (лаборант), зарплата от 10000 руб. Тел.: 8-961-339-11-13, 8-905-028-73-46. 2-4.**


1-10.

**ТЕПЛИЦЫ**
**от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д.**
**Телефоны:**
**8-917-651-00-76**
**8-927-858-28-79.**

* * *

**Требуются рабочие на производство мебели. З/плата сдельная, своевременная.**
**Тел.: 8-903-065-50-40, 8-905-343-08-23. 1-2.**

* * *

**Продаю ОПГС (гравмасса), песок.**
**Тел.: 8-905-199-69-33. 18-19.**

* * *

**Салон мягкой и корпусной мебели предлагает мебель для гостиной, спальных комнат, шкафы-купе, детскую мебель, наборы мягкой мебели, межкомнатные и металлические двери, фурнитуру к ним. Мы также изготавливаем мебель на заказ. Адрес: с. Моргауши (здание бани). Тел.: 8-965-686-08-96. 4-4.**

* * *

**Требуются рабочие на производство пластиковых окон. Тел.: 8-917-662-71-64. 4-5.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли шăши тĕслĕ тынашки сутатпăр.**
**Тел.: 8-927-859-26-65, 8-952-025-14-74.**

* * *

**Требуется в ООО «Виктория плюс» бухгалтер.**
**Требования: высшее образование, знание 1С 8.2. Приветствуется опыт работы в «Камин», Клиент-банк. Обязанности: ведение бухгалтерского учета в торговле. Условия: пятидневная рабочая неделя, полный рабочий день. Оклад - 10000 руб. Место работы: д. Ярославка Моргаушского района. Тел.: (8352) 446-448.**

* * *

**Продаю земельный участок в центре с. Моргауши по ул. Чапаева, для индивидуального жилищного строительства (газ, вода, электричество, асфальтированная дорога). Тел.: 8-987-662-52-47.**

* * *

**Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши, недорого. Тел.: 8-960-313-58-08. Ирина.**

* * *

**Продаю копалку двухрядную, прицепную и корову черно-белой масти, второй отел в апреле.**
**Тел.: 8-927-855-31-95.**

* * *

**Январь пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли ăратлă ĕнен хура-шурă тĕслĕ тынашкине сутатпăр.**
**Тел.: 8-906-386-81-07, 8-937-389-56-50.**



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете пана 27.08.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4749.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.